Ч84.89(2Чув)
И97
4-37344

Николай ИШЕНТЕЙ

# ҪАВРА КӲЛĔ ХĔРРИНЧЕ



Национальная библиотека ЧР
4-037344

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР
К84.29(=Чув)
И97

Николай ИШЕНТЕЙ

# ҪАВРА КӲЛӖ ХӖРРИНЧЕ

Юмах



Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2001

УДК 821. 512. 111—93
ББК 84 (2Рос—Чув)—4
И 97

2- 37344
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

**Николай Ишентей.**
И97 Çавра кӳлӗ хӗрринче: Юмах. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2001. — 40 с.

Юмахри ӗçсем Тарьюхтар ятлӑ ялти Çавра кӳлӗ хӗрринче пулса иртеççӗ. Кӳлӗри таса та сӑваплӑ шыв çухалнине пула асӑннӑ ялта пурӑнакансен пурнӑçӗ чӑтма çук йывӑрланса çитет, анчах хӑюллӑ автан Шиппи çухалнӑ шыва тупать, маттур йӗрке хуралçи пулса тӑрать.

УДК 821. 512. 111—93
ББК 84 (2Рос—Чув)—4

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2001
© Ишентей Н. П., 2001

ISBN 5-7670-1194-X

ПРОВЕРЕНО
2010



## Пĕрремĕш сыпăк

# ТАРЬЮХТАР ХАПХИ — ÇИЛ ХАПХА

Çак ĕç Сар хĕвел çĕршывĕнче Тарьюхтар ятлă ялта çӳхӳ çунă çул пулса иртнĕ. Ку ял таврари ытти ялсем пек мар, тĕлĕнтермĕшсенчен пуянскер пулнă, тĕлĕнтермĕшсĕр кун иртмен унта. Йĕркипе каласа парам-ха эппин.

Тарьюхтар ялĕн пĕр хапха — укăлчари çил хапха. Вĕрлĕк витĕр çил вылять. Çил хапхаран кĕрсенех Çавра кӳлĕ курăнать.

Тăрă кӳллĕн сиплĕ шывĕ Тарьюхтарта пурăнакансене туслăх картине пĕрлештерет, пурăнма вăл-хал кӳрет.

Ялта аслă пуçлăх пур — каçăр сăмса Шурă хур. Унăн ячĕ Хушсалар. Ахаль лармасть пуçлăхра — тем те пĕр курать, тем те пĕр илтет, тем те пĕр пĕлет.

Йĕрке хуралçи — Автан. Вăл хăйĕн тивĕçне чыслăн

пурнăçлама хăнăхнă. «Ку-ку-ре-ку! Йёрке хуралçи пур!» — ирсерен çапла сас парать вăл, мăнаçлăскер, чысне çухатиччен пуçне çухатма хатĕрскер.

Сарă Чăх — кĕлет хуçи, пурте хисеплекен шут ăсти. Вăл пӳлмери тырă пĕрчисене шутлать, хăй ĕçне йăнăшсăр, тирпейлĕ тăвать.

Тарьюхтар ялĕнче пĕртен-пĕр ĕç лаши пур — Чуманкка. Вăл пĕртте чуман мар, питĕ ĕçчен те вăр-варскер. Кирек мĕнле ĕç хушсан та пĕр хирĕçлемесĕр пурнăçлать: турта хушшинчен яра куна тухмасăр ака-суха тăвать, авăн-ашăмпа тертленет, урапа-çуна сĕтĕрет. Ĕç лаши, тирпейлĕскер, пуçлăх хушнине вăхăтра пурнăçлама ĕлкĕрет пулин те çилхи çумне çыпçăннă куршанака тасатма вăхăт тупаймасть. Ĕçсĕр кун çук, ĕçлекене пайти çук — çил хапхаллă картарах ĕмĕрне ирттерет вăл.

Тарьюхтар ялĕнче авалтанпах çакăн пек йĕрке пулнă — пурин те аслă пуçлăха пуç таймалла! Автан çак йĕркене çирĕп тытса пынă. Ăна пăссан выртса макăрăн. Ку ялта пуçлăха пуç тайни — пурнăç тыткăчи вĕт-ха.

Тарьюхтар хапхи — çил хапха — чĕриклетсе уçăлать... Кун иртет те, каç пулать.





## Иккӗмӗш сыпӑк

## АХ, КӐЛЛИ ТӐРӐЧЧӖ!

Чуманкка иркӳлӗм яланхи йӗркепе ӗҫе кайма хатӗрленчӗ. Вӑл ҫултан юлас марччӗ-ха тесе ыраш уламӗ хӑпӑл-хапӑл ҫикелерӗ те ял варринчи Ҫавра кӳлӗ хӗррине кӑмӑл туличчен шыв ӗҫме анчӗ. Анчах мӗн ку?.. Кӳлӗ ҫук. Такам ӑна вӑрласа кайнӑ. Астӑвать-ха Чуманкка тиха чухнехине: амӑшӗпе пӗрле пӗррехинче ешӗл курӑк ҫиме тухнӑччӗ, кӳлӗ урлӑ чӗкеҫсем вӗҫнине сӑнанӑччӗ. Ах, кӳлли пысӑкчӗ, аслӑ урам анлӑшчӗ. Чӗкеҫ ун урлӑ вӗҫнӗ чух шывне чӑпӑрт сыпатчӗ. Ах, кӳлли тӑрӑччӗ!.. Чӗкеҫ пӗчӗк чӗппине чӑпӑл туса илетчӗ, вӗтӗ-вӗтӗ хумсем кӗмӗл ункӑ хыватчӗҫ. Такам ҫавӑн пек чаплӑ кӳлле вӑрласа кайнӑ, пӑтранчӑк шыв кӳлленчӗкӗ ҫеҫ хӑварнӑ.

Чуманкка мӗн тумаллине хӑвӑрт тавҫӑрса илчӗ — кӳлӗ

çухални çинчен йӗрке хуралçине каласа памалла. Вăл çапла турӗ те.

Автан Çавра кӳлле шырама пуçларӗ. Ăçта кăна çитмерӗ, камран кăна ыйтмарӗ пуль вăл хăйӗн таса тивӗçне пурнăçлас тесе. Анчах усси пулмарӗ — Çавра кӳлӗ тупăнмарӗ. Вара Автан ял хушшинче пуçне чиксе çӳрекен пулчӗ: намăсланчӗ, тарьюхтарсене куçран пăхма именчӗ. Хăйне çак инкекшӗн айăплăн туйрӗ. Кам та пулин ятлинччӗ хуть — çăмăлрах пулнă пулӗччӗ. Çук вӗт. Ăна пурте шанаççӗ. Вăл вара шанăçа тӳрре кăлараймарӗ — урам сарлакăш кӳлле тупаймарӗ. Ку намăса курнă хыççăн Автан йӗрке хуралçинче ӗçлеме пултараймасть. Вăл, çуначӗсене уснăскер, картишӗнчи чи тӗттӗм кӗтесе лăпчăнчӗ те шухăша путрӗ.

Çак кунран пуçласа тарьюхтарсем шăршлă кӳлленчӗкри пăтранчăк шыва ӗçсе кун кунларӗç, пурнăçа сыпăнтарчӗç, вӗсен туслăх карти те аркана пуçларӗ.



### Виççӗмӗш сыпăк

## АВТАН ТУС, ПУÇНА АН УС

Сарă Чăх сарай çунатти айӗнче ăшă йăвара пӗр хускалмасăр ларать. Ӗнтӗ паянхипе миçемӗш талăк шыв ӗçме те, пӗрчӗ сăхма та анмасть. Вăл шухăшлать. Шухăшлать-шухăшлать те кирлӗ шухăш — чунне лăплантараканни — тупăнман пирки çак хаяр тӗнчене курас мар тесе куçне хупать. Хăйӗн ӗç-хӗлне хак пама хăтланать. Вăл шут ӗçне



тăрăшса турĕ пулсан та тарьюхтарсен пурнăçĕ çăмăлланмарĕ. Апла унăн пĕтĕм ĕçĕ — харам. Сарă Чăх хăйĕнчен хăй вăтаннипе пусне çуначĕ айне чикет — юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕçсем куç умне шуса тухаççĕ.

Пĕррехинче унăн пысăк инкек пулнăччĕ: мăйĕнчи çичĕ йăлтăркка мерчен шăрçаран пĕри ӳксе çухалнăччĕ. Автан самантрах таса тивĕçне пурнăçларĕ: çухалнă шăрçана улăм ăшĕнчен шыраса тупрĕ те ăна чыслăн тавăрса пачĕ. Халĕ çавăн пек маттур йĕрке хуралçи урам сарлакăш кӳлле шыраса тупаймасть. Кунта темĕнле вăрттăнлăх пурах. Мĕнпе пулăшмалла-ши мăшăрне?

Тепрехинче Чуманккапа пăтăрмахлă ĕç пулса иртрĕ. Ĕç лаши çурхи ака ĕçĕсене вĕçлесе килчĕ. Кĕлет хуçи Сарă Чăх ăна савăнăçлăн кĕтсе илчĕ. Епле савăнмăн-ха, ĕçчен лаша ĕçе вăхăтра тунăран Тарьюхтар ялĕнче пурăнакансем çулталăкĕпех кăпăшка та техĕмлĕ çӳхӳ е кулачă, кĕлентĕр е пӳремеч — мĕн кăмăла каfive, çавна çисе пурăнĕç. Анчах таçтан çил хăвалакан Йытă тупăнса килчĕ.

— Хам-хам! Суха турăм хам! — терĕ Йытă Чуманкка еннелле аякранах çилĕллĕн шăл йĕрсе. Юрать йĕрке хуралçи Автан вăхăтра çитрĕ, вăл çилхăвана намăслантарчĕ, тăрă шыв çине кăларчĕ. Ку çеç те мар, Автан:

— Ĕçчен Чуманкка чапĕ тĕнче хĕррине çитме тивĕç, — терĕ. Анчах Чуманккан чапланас шухăш-и?

— Мана нимĕнле чап та — тĕнче хĕрринчи те, Çавра кӳлĕ таврашĕнчи те — кирлĕ мар. Тăраниччен ĕçмелĕх тăрă шыв çеç кирлĕ. Тата... вунă çул ĕçленĕшĕн тивекен шалупа ăшă çурт лартма май килсен тем пекехчĕ... — çапла каларĕ ĕç лаши çурма сасăпа. Çапах та ун сасси пурне те шарт сиктерчĕ.

— Намăс пире, намăс! — кускаларĕ Сарă Чăх. — Вунă çул хушши пуринчен те тимлĕрех, тăрăшуллăрах ĕçленĕшĕн Чуманккан çил хапхаллă картара мар, чаплă керменте пурăнмалла. Унăн шăршлă шыв мар, шерпет ĕçсе рехетленмелле.

Йĕрке хуралçи Автан ку йĕркесĕрлĕхе пĕтерме хушрĕ:

— Укçа-тенкĕ çитеймесен шалу шучĕпе тырă шутласа памалла, — терĕ. Сарă Чăх кĕттермерĕ.

— Эпĕ халех. Пĕлтĕрхи тырă та кĕлетре çителĕклех-ха, — тесе хушнине пурнăçлама пуçларĕ. Чуманкка умне кăшăла тĕштырă купаланма тытăнчĕ. Шут ăсти ĕçлет, ĕç лашипе калаçать: — Хĕле кĕриччен ăшă çурт кĕрлеттерселарт-ха пĕрре. Вăт ку аван пулать. — Акă Сарă Чăх хăй ĕçне вĕçлерĕ. — Пулчĕ, — терĕ вăл юлашки пĕрче илсе хурса. — Ку тулла авăртса çӳхӳ пĕçерсен пĕр пӳртлĕх вăрман туянма пулать. Урай сарма, калай витме çитеймест-ха. Хамăн тырра кивçен парăп...

— Кивçен илсен тавăрса парасси. Эх, часрах мĕн пур мулăмпа вăрман туянас та çурт çавăрас. Çине хам çиес улăма та витме пулĕ. Урай çуккишĕн те аптăрамăттăм — юрпа çумăр кăна ан кĕтĕр, — ĕмĕтленчĕ Чуманкка.

Сарă Чăхпа Чуманкка кăмăллăн калаçса ĕç лашине тивĕçекен тырра урапа çине тиеме пуçланăччĕ. Çав вăхăтра вĕсем патне пуçлăх тайкаланса килни курăнчĕ. Мĕн тăвăн, пуçлăха тĕл пулсан пуç таймах тивет. Йĕрки çапла.

— Мĕн ĕçлетĕр? — ыйтрĕ пуçлăх пуç таякансем çине çўлтен пăхса. Сарă Чăх евĕклĕн калаçрĕ:

— Кăçал та сивĕ хĕл килет пуль терĕмĕр. Çавăнпа Чуманкка çил картаран тухасшăн, ăшă çурт çавăрасшăн. Çурт тăвасси çатан авасси мар. Ăна пĕчĕккĕн тума тытăнмасан ĕç лашин каллех шартлама сивĕре хытăркамалла пулать. Вăт çавăнпа ăна шалу шутласа патăм.

— Аван, — терĕ Хушсалар мăйне ыйту палли пек авса хурса. Пуçлăхăн çак хусканăвĕ темĕн ырă марра систерчĕ. — Сарă Чăх, эпĕ сана канма ярас тетĕп, — тепĕр хут çăвар уçса каларĕ Хушсалар. Унăн кукăр мăйĕ тўрленчĕ, сăмси каçăрăлчĕ.



## Тăваттăмĕш сыпăк

## ШУТ ĂСТИ КАНАТЬ, ЙĔРКЕ ХУРАЛÇИ ХАЛĔ ТЕ ÇУНАТ УССА ЛАРАТЬ. ЯЛ ÇĂВАРĔ ХАПХАСĂР

Сарă Чăх канăва тухрĕ. Вăхăта усăллă ирттерес тесе вăл çичĕ çăмарта турĕ, пусма ларчĕ.

Шухăш хыççăн шухăш çаврăнать пуçра. «Кĕлет хуçи пулма каллех Шульăк Шăшие лартсан тарьюхтарсен мулĕ те, шăпи-телейĕ те шăши шăтăкĕнчех çухалать пуль. Йĕрке хуралçине йĕркене кĕртесчĕ, кăмăлне çавăрасчĕ. Унсăрăн тарьюхтарсем уй-хирте тар тăкнин ним усси те пулас çук», — шухăшларĕ Сарă Чăх. Вăл пусма ларнă çĕртенех, уçăлмалла тенĕ пек, мăшăрĕ патне вĕçе-вĕçе анчĕ, ăна йĕрке тума



ӳкĕтлерĕ. Анчах Сарă Чăх кускалани кăлăхах пулчĕ — усăк çунатлă Автан тĕттĕм кĕтесрен тухмарĕ.

Тарьюхтар ялĕнче çĕнĕ хыпар сарăлчĕ: Чуманккана ĕçрен кăларса янă. Хальччен пур йывăр ĕçе те пĕр турткалашмасăр тунă ĕç лаши текех ĕçе çӳремест. Пĕтĕм Тарьюхтар ялне вунă çул хушши ытлă-çитлĕ пурнăçпа усранă ĕçчен халĕ никама та кирлĕ мар иккен. Чуманкка вырăнне Урра Урхамах килет имĕш. Çав Урра Урхамах пуçне ухса иртнĕ чух çилхи шевле сарри сапать, хăватлă ăмăрĕ пĕлĕтсене сирет теççĕ. Вăл юртса-чупса иртнĕ чух çунатлă тейĕн — урисем çĕре тивмеççĕ-мĕн. Чуманккаран çичĕ хут чаплăрах урхамах килсен Тарьюхтар ялĕнчи ырлăх та çичĕ хут лайăхланать иккен. Пурте çав урхамаха ĕçне кура мар, сăннепуçне кура мухтаççĕ. Уй-хирте мĕнле мухтавлă ĕçсем тăвĕши вăл? Çакна халлĕхе никам та пĕлмест-ха.

Çĕнĕ хыпар ял тавра çунатланса çаврăнчĕ. Ăна илтсен йăвара ларакан Сарă Чăх та пăлханса кайрĕ. Унăн чĕри сик-

ме пуçларĕ. Ах, чăх чĕри мар-и? Урра Урхамах чаплă пулсан та мĕншĕн Чуманккана кӳрентерес? Уй-хирте чаплă Урхамах валли çеç мар, хура ĕç тума ӳркенмен Чуманкка валли те ĕç çителĕклех-çке.

Сарă Чăх, çичĕ çăмарта çинче пусма лараканскер, унччен кунне пĕр хутчен чун усрамалăх пĕрчĕсем сăхкалама йăваран картишне тухатчĕ. Пуçлăх тĕрĕсмарлăхне пула Чуманкка куракан инкеке хăй инкекĕ вырăнне хунăран вăл чĕре сури тума та анмарĕ, тумлам шыв та ĕçмерĕ. Вăйран кайнăскер хăйăлтатакан сасăпа виçĕ сăмах калама çеç вăй çитерчĕ:

— Пуçлăх чунсăр-шим капла?..

Анчах ун вăйсăр сасси пуçлăх патне çитеймерĕ çав. Ял хыпарçи Çерçи çеç, сарай пуçĕнче хĕвелçаврăнăш шĕкĕлчесе лараканскер, илтрĕ çав хăйăлтатăва. Анчах та тĕрĕс мар илтрĕ, мĕншĕн тесен çил çинче шăхăракан хĕвелçаврăнăш хуппи тĕрĕс илтме чăрмантарчĕ. Ахах пĕрчи тупнăн хĕпĕртесе Çерçи илтнĕ хыпара яла пĕлтерме васкарĕ. Вăл хыпар валеçнĕ чух та хĕвелçаврăнăш шĕкĕлчеме чарăнмарĕ. Çавна пула Тарьюхтар ялĕнче пурăнакансен хăлхисем те суя сăмах илтнипе шăхăрчĕç. Ял хушшинче «пуçлăхран пшик пулать» текен сăмах сарăлчĕ. Хăшĕ-пĕрисем çак хыпара илтсен Сарă Чăх ăсран тайăлнă пуль терĕç, теприсем:

— Сарă Чăх — пултаруллă шут ăсти. Вăл тимлесен пуçлăха та тăрă шыв çине кăларĕ, — терĕç. Ял çăварне хапха хупнă пек хуплаймăн çав.





## Пиллёкмёш сыпăк

## ЧĔПĔ ÇАР КИЛНИ

Сарă Чăх хăй айĕнче тем йăшăлтатнăран йывăр шухăшсенчен хăтăлчĕ. «Тинех, тинех тухаççĕ чĕппĕмсем-тĕпренчĕкĕмсем», — пăшăлтатрĕ вăл. Çак ырă йăшăлтату ăна, халсăрланнăскерне, хăват пачĕ. Вăл ырă туйăмсен тыткăнне кĕрсе ÿкрĕ. Сарă Чăх çак самантра Тарьюхтар ялĕн йывăр нуши-терчĕ пирки те манчĕ. Вăл çăмартаран тин тухнă чĕпсене ачашларĕ, ăшăтрĕ. Унтан вĕсене çунат вĕçĕпе тĕллесех шутласа тухрĕ. Пурĕ пĕрле çичĕ чĕп шутласа кăларчĕ вăл. Сыхă амăшĕ чĕпсене картишне ертсе тухиччен кирлĕ канашсем пачĕ. Вăл пĕрремĕш чĕппе çуначĕпе çупăрларĕ те ачашшăн çапла каларĕ:

— Шиппи, ан шиклен. Шикленмесен аçу пекех хăюллă автан пулăн. Кам шикленет — шик тупать, кам тăрăшать — тус тупать.

Иккĕмĕш чĕппе ачашламарĕ — юнаса илчĕ:

— Чĕрре ан кĕр, Чăрсăрри. Çапăççан пулмасть ырри. Ыр сунакан хур курмасть, ырă ĕç те çухалмасть.

Ăшпиллĕ амăшĕ хыçалта чĕтресе тăракан чĕппе те тӳрех асăрхарĕ. Вăл ăна çунат вĕçĕпе кăчăк туртса хăй патне чĕнчĕ:

— Кайри чĕпĕ, Каптăркка, малтине çитме васка. Каламасан кам пĕлĕ — кашни хурчка сан пулĕ.

Авă пĕр чĕппи ленкер çине улăхса кайма та ĕлкĕрнĕ. Сарă Чăх ăна ик çунаттипе харăс юнарĕ:

— Пуçтаххи, кăшт сапăр пул, вăйли валли вăйли пур. Ыр чĕп çине çу тумлать, усалли çине юн тумлать.

Пĕр-пĕрин çумне тĕршĕннĕ айванкка чĕпсем патне амăшĕ хăй пычĕ. Вĕсене çунат çине лартса пĕр тапхăр утьăкка сиктерчĕ те çепĕççĕн йăпатрĕ:

— Хурлăхли, хаваслă пул, Йăвашши те йышпа пул. Йышпа пĕрле шик те çук, инкекре те аптрас çук.

Çиччĕмĕш чĕппе, тĕпеклине, амăшĕ ак çапла ăс пачĕ:

— Тĕпекли, кашнин валли пурнăç перекечĕ пул. Çукки хыççăн ан çӳре, пуррине перекетле.

Сарă Чăх хăйĕн чĕпписене çав тери юрататать: çупăрлать, ачашлать, айне лартса ăшăтать. Амăш тăрăшни сая каймарĕ — чĕпсем пурте хĕвелккесем пек сиккелеме пуçларĕç, амăшĕ тавра кĕшĕлтетеççĕ кăна. Чĕпсем пăхма пурте пĕрешкел. Çапах Сарă Чăх куçне хупсан та кашни чĕппе ыттисенчен уйăрса илме, ятран асăнма пултарать.

* * *

Сарă Чăх чĕппisемпе аппаланнă вăхăтра Автан тĕттĕм кĕтесре çуначĕсене усса ларчĕ. Сасартăк унта Хур Хушсалар хăй персе çитрĕ.

— Çухалнă кӳлĕ тупăнмарĕ-и? — ыйтрĕ пуçлăх хуравĕ мĕнле пуласси́не пĕлчĕ пулин те. Автан хуравлама ĕлкĕреймерĕ — сарай çунатти айĕнчен Сарă Чăх кăлăкласа анчĕ. Ун хыççăн сарă-сарă хĕвелкке-пӳскесем пĕрин хыççăн теп-

ри кусса анчӗҫ. Картиш самантрах ҫуталса кайрӗ. Автан ҫакна курсан питӗ хӗпӗртерӗ — унăн усăк ҫуначӗсем тӳрленчӗҫ. Вăл ура ҫине тăчӗ, мăнаҫлă та ҫирӗп утăмсемпе Хушсалар умӗпе иртрӗ, картиш варрине чыслăн утса тухрӗ. Ҫуначӗпе пӗрре сулсах ҫил хапха тăррине вӗҫсе хăпарчӗ. Вара тӗнчене тӗлӗнтермелле уҫă та ҫирӗп сасăпа авăтса ячӗ:

— Урра! Килчӗ чӗпӗ ҫар — йӗрке пулӗ, Хушсалар!

Автан вӗҫсе анчӗ те йӗрке хуралҫин тивӗҫне пурнăҫлас тӗллевпе картиш тавра утса ҫаврăнчӗ. Чӗпӗ ҫар ӗречӗ ăна пуҫ тайса чыс турӗ. Ӗрет вӗҫӗнче тăракан сар сăмсаллă Шиппи те ашшӗ пекех тӗнчене тӗлӗнтермелле авăтса ярасшăн пулчӗ — вăл та автан-ҫке. Автанăн хăюллă пулмалла. Шиппи ашшӗне пулăшма хатӗр пулнине пӗлтерес тесе пур пек вăй-халне пухса авăтса ячӗ. Анчах хăватлă ку-ка-ре-ку! вырăнне шиппи-шиппи текен вăйсăр сасă ҫеҫ тухрӗ. Унăн сассине никам та илтмерӗ. Ҫапах та Шиппи кӳренмерӗ — вăл ашшӗне пулăшатех.

Кайран чӗпсемшӗн ăнланмалла мар ӗҫсем пулса иртрӗҫ. Хушсалар — вӗсен ашшӗнчен чылай пысăк та тӗреклӗ хур аҫи — кашта пек мăйне хăрушла тăсса, ҫӗлен чашкăрнă пек сасăпа шăхăрса Автан патне ҫывхарчӗ. Ҫакна курсан Шиппи хăранипе чӗтрене ерчӗ, урисем утми пулчӗҫ. Ҫапах та вăл картишӗнчи пысăк чул хыҫне пытанма пултарчӗ, йăмăкӗсене те хӳтлӗхе тăратрӗ. Шиппи амăшӗ каланине аса илчӗ, чунне хытарчӗ, шикленчӗ пулсан та чул хыҫӗнчен пуҫне кăларса пăхрӗ.

Акă мӗнле ӳкерчӗк тухса тăчӗ сар сăмсаллă чӗп умне. Автан Шиппи пек шикленмен; вăл, шӗвӗр сăмсипе сăхма, ҫивӗч чӗрнипе чӗрмелеме хатӗрленнӗскер, Хушсалар ҫине тарăхупа хӗрелнӗ куҫӗсемпе тинкерет. Кӗҫ-вӗҫ сиксе ларас пек. Парăнмастех унăн хăюллă ашшӗ, парăнмастех!.. Шиппи хатăрланчӗ, ашшӗне пулăшма тесе чул хыҫӗнчен тухма та хатӗрччӗ... Сасартăк Хушсаларăн вăрăм мăйӗ кукăрăлчӗ. Вăл Автана чашкăрса тухакан сасăпа ҫапла каларӗ:

— Эс-с... чыссăр хуралçă...

Çакăн хыççăн Автан паттăрлăхĕ таçта кайса çухалчĕ — унăн сăмси те, çуначĕсем те усăнчĕç.

Шиппи Хушсалар мĕн каланине ăнланмарĕ, анчах чухларĕ: ун ашшĕне тăшманĕ сăхса та мар, çапса та мар, Шиппи ăнланма пултарайман хăватлă вăйпа çĕнтерчĕ.

Шиппи самантлăха тăвăл тамалнине туйрĕ те чул хыçĕнчен тухрĕ. Хушсалар картиш варринче çĕнтерӳллĕн курнăçланчĕ — ахаль те каçăр сăмсине тӳпене çитесле каçăртрĕ. Çавăнпа та утнă чух тем пысăкăш шур чула та асăрхаймарĕ, унран такăнчĕ. Аслă пуçлăхăн йĕпкĕн хĕрлĕ сăмси пылчăкпа вараланчĕ.

— Унăн сăмси çеç мар, чунĕ те вараланчăк, — илтрĕ Шиппи ашшĕн сассине.

— Вăт, вăт, Хушсалара тăрă шыв çине кăларма тахçанах вăхăт, — Автанпа килĕшсе сăмахларĕ Сарă Чăх та.

— Эх, çухалнă Çавра кӳлле тупасчĕ. Вара... — илтĕнчĕ Автанăн пăшăлккă сасси.

Çак ĕç хăвăрт пулса иртрĕ. Хушсалар мĕнле хыпаланса килнĕ, çавăн пекех хăвăрт тухса кайрĕ. Самантлăха чăл-пар саланнă чĕпсем каллех амăш тавра пухăнчĕç.

— Кĕрпе пĕрчи ӳкиччен нуша пĕрчи тăкăнать-çке сирĕн тĕле, — хĕрхенсе ачашларĕ Сарă Чăх юратнă чĕпписене.

«Нуша пĕрчи мĕнлескер-ши? — шухăшларĕ Шиппи. Вăл ашшĕ çине пăхса илчĕ — унăн усăнчăк çуначĕсем тӳрленмерĕç, вĕсене пысăк чул хĕстерсе хунă тейĕн. — Апла нуша тени йывăр япала», — ăнкарса илчĕ чĕп.

Сарă Чăх чĕпсемпе пĕрле Автана та йăпатма пуçларĕ:

— Вăт, вăт, пĕтĕм ял пĕлет эсĕ тӳрĕ чунлă пулнине — ахалех хуçăлатăн. Йĕрке хуралне чĕпĕ çар килнĕ ятпа авăтса савăнтар пире.

— Эх, çухалнă кӳлле тупасчĕ, вара пурте пулĕччĕ: намăса та сирĕттĕм, савăнăç юрри те юрлăттăм, Тарьюхтар ялĕ те туслăх картине тăрĕччĕ.

Автан сăмахĕсене чĕпĕ çар хайле ăнланчĕ:

— Паянах, халех çухалнă кӳлле шырама каймалла, — пăшăлтатрĕç чĕпсем пĕр ушкăна пухăнса. — Хушсалара тăрă шыв çине кăлармa Çавра кӳлле тупмаллах. Çунат усса ларнинчен мĕн усси пултăр?



## Улттăмĕш сыпăк

## ШАКЛА ĂС, СУККĂР ĂС ТАТА КӲЛЧЕЧЕК

Çавра кӳлĕ çухалсан тепĕр ирхине Тарьюхтар ялĕнче пурăнакансем акă мĕнле тĕлĕнтермĕш асăрханă: Чечеклĕ уничере — Хушсаларăн чаплă керменĕ умĕнче — асамат тĕрриллĕ пĕрĕхтеркĕч çичĕ тĕслĕн ялкăшать. Пĕрĕхтеркĕч айĕнче хальччен курман кĕмĕл шыв. Пăхсан витĕр курăнать. Мĕнле шыв вăл — кам пĕлет? Кӳлĕ теме — кӳлленмест, чечек теме — ешермест. Илемĕпе пурпĕрех чечекрен те ирттерет. Пĕрĕхтеркĕч шыв уçлать — чарăнми шыв пĕрĕхет, ярăм-ярăм асамат эрешĕпе сапăнать... Пăхса тăранмалла мар. Мĕнле сăмах тупмалла çак илеме сăнлама? Шухăшласа пăхар-и?.. Кӳлли те пур, чечек те çак пĕрхĕнчĕк варринче. Эппин ку вăл Кӳлчечек. Тĕлĕнтермĕш Кӳлчечек.

Çак Кӳлчечек варринче, асамат ытамĕнче, хӳхĕм ӳкерчĕк çинчи пек шурă-шурă хур ами илĕртӳллĕн ярăнать. Çакă хур вăл Суйпике, аслă пуçлăх мăшăрĕ. Суйпике илемĕпе иртен-çӳрен киленет, çак ырлăхран тĕлĕнет. Тарьюхтарсен шывĕ те тăраничченн ĕçмелĕх çук, кунта акă пĕрĕхет кăна çутă кĕмĕл сиплĕ шыв.



Мĕнле майпа Хушсалар çак ырлăха тунă-ши? Ĕçĕ акă мĕнре. Пуçлăхăн пулăшакансем пур: Шакла Ăс тата Суккăр Ăс. Иккĕшĕ те питĕ ăслăскерсем. Анчах вĕсем пурри çинчен ку таврара пĕлсех каймаççĕ, мĕншĕн тесен пĕри ниçта тухмасăр çырмари шăтăк пичкере пурăнать, тепри — çĕр хăвăлĕнче.

Шакла Ăс — Тарьюхтар ялĕнчи чи ăслă кушак. Вăл хăй пурнăçне Чуманкка пекех йывăр ĕçре тар тăкса ирттерет. Ăслăлăх ĕçĕнче. Вăл Хушсаларăн тем те пĕр тума пĕлекенĕ. Шакла Ăс Хушсалар хушнипе шакла тăвайккинче те кермен тунă. Çав тери чаплине, хăтлине, сенкер тӳпе тĕслĕ шăвăç витнине. Хăйшĕн мар, пуçлăх ырлăхĕшĕн ĕçленĕ вăл. Хăйне ята хуралтă та тăвайман-ха — шăтăк пичкерех кун кунлать. Кам ырă чунлă, тӳрĕ кăмăллă, çавă ыттисем пирки чи малтан шухăшлать мар-и. Шакла Ăс та пуçлăха хирĕçлеме пултарайман: ĕçленĕ, ĕçленĕ, ĕçленĕ... Тарьюхтар ялĕнчи йĕркесĕрлĕхсем пирки тĕшмĕртмен те.

Суккăр Ăс Каюра пирки апла калаймăн. Вăл пачах урăх-



Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч- 37344

ла — пурне те пӗлсе тӑнӑ. Пуҫлӑхӑн тем те пӗр пӗлекенни пулма ӑна ҫивӗч хӑлхи — ӑс параканни пулӑшнӑ. Суккӑр Ӑса куҫсӑр пулни чӑрмантарман: вӑл ҫӗр айӗпе ҫул хывма, кирек ӑҫта кӗрсе тухма, кирек кам калаҫӑвне вӑрттӑн итлесе тӑма пултарнӑ.

Суккӑр Ӑсшӑн Ҫавра кӳлӗ айӗнчен пуҫласа Чечеклӗ уничене ҫити ҫӗр хӑвӑлӗ тӑвасси йывӑр ӗҫех пулман. Шакла Ӑс унта насус вырнаҫтарнӑ. Вӑт епле майпа Ҫавра кӳлӗ урам варринчен куҫса кайса Кӳлчечек пулса тӑнӑ. Унӑн ярӑм-ярӑм асамат тӗрри ҫине пӑхса тӑранмалла мар, анчах ҫав ырлӑх Суйпикепе Хушсалар валли ҫеҫ. Тарьюхтар ялӗнче пурӑнакансен кӳлленчӗкри шӑршлӑ шывпах ҫырлахмалла.



## Ҫиччӗмӗш сыпӑк

## ҪӲХӲ ҪУНИ

Хӑйне ӗҫрен кӑларса янӑшӑн Чуманкка кулянма пӗлмерӗха. Унӑн ахалех ӗҫ нумай: ҫурт лартма ӑнаҫлӑ вырӑн шыраса тупмалла, вӑрман турттармалла, хӑтлӑ ҫурт ҫавӑрмалла... Юрать-ха вӑл хӑйне ӗҫрен кӑларса яриччен Сарӑ Чӑх шутласа панӑ тырра тиесе таврӑнчӗ. Укҫи-тенки кӑрӑсрах пулин те ҫак мулпа ҫурт кӑшкарӗ ҫавӑрма пулать. Ҫурт ҫине хӑй ҫиес улӑма та витӗ, урайӗ ҫӗр пулни те темех мар. Ҫак ӗҫсемпе тӑрмашрӗ вӑл: пӗрене турттармалли вӑрӑм урапине юсарӗ, тырӑ авӑртрӗ, ҫӳхӳ пӗҫерчӗ.

Ыран пасара каятӑп тенӗ чух Чуманкка ырӑ шӑршӑллӑ ҫӳхӳсене урапа ҫине тиерӗ. Пурлӑхне шутласа хума пӗлмерӗ —



ёҫ лаши хура ёҫ тума ҫеҫ пӗлет, шут ёҫне чухласах каймасть.

Ёҫленӗ хушӑра кӑпӑшка та техӗмлӗ ҫӳхӳсенчен перекен ырӑ шӑршӑ Чуманкка сӑмсине кӑтӑкларӗ. Ёҫ лаши пулса вунӑ ҫул хушши уй-хирте чи йывӑр ёҫсенче тертленнӗ пулин те кунашкал чаплӑ ҫимӗҫ астивсе курман-ха вӑл. Ыраш улӑмӗпех хырӑмне улталанӑ. Ҫапах та ёҫленӗ — ҫултан юлман. Халӗ те вӑл мулне перекетлерӗ, пӗр тӗпренчӗк те ӑша ямарӗ. Чӑтрӗ. Сӗлекине ҫеҫ лӑнкӑртаттарса ҫӑтрӗ. Пӳртлӗх вӑрман туянма ӑна нумай-нумай ҫӳхӳ кирлӗ-ҫке.

Чуманкка урампа хавассӑн юртать. Урапа тулли ҫӳхӳ тиенӗ хӑй. Вӑл ыран ирех пасара кайӗ те пӳрт пӗренисем туянӗ... Эх, чӑнах хӑтлӑ ҫурта кӗрӗ-ши вӑл? Кӗрлеттерсе лартӗ-ши? Чӑн-ши? Тӗлӗк мар пулсан ёҫ лаши те вӗрлӗк картара тек хытӑркамӗ. Шартлама сивӗ те хӑрушӑ пулмӗ.

Ёмӗтсем, ёмӗтсем... Ытла ырӑ та пылак иккен вӗсем. Ҫавӑнпа ёҫ лашин кӑмӑлӗ те аван. Анчах пур чухне те ёмӗтсем пурнӑҫа кӗмеҫҫӗ-ҫке. Сасартӑк:

— Хам-хам! Тăхтасам, кирлĕ сăмах калам! — илтрĕ Чуманкка çил хăвалакан Йытă сассине. Лав чарăнчĕ. — Хам хăлхапа хам илтрĕм. Кунтах пӳртлĕх вăрман сутакан пур — туянсам! Систерес терĕм хам. Аукцион пулать — пĕрене пасарĕ. Пырсам! Ăна «Хăлхапа Асав Шăл» фирма йĕркелет — пĕлетĕп хам. Акă адресĕ: Армак-чармак хурама варĕ... Ну, эпĕ каям, — терĕ те Йытă çил хăваласа урампа чупрĕ.

«Епле улшăнса кайнă Йытă — пуçтахланма пăрахнă, таравтлăн калаçать. Тӳрленет пуль», — шухăшларĕ Чуманкка.

* * *

Хĕвел анчĕ. Тарьюхтар ялĕ тарăн ыйха путрĕ. Чуманкка та тĕлĕрет. Тӳпере пĕччен уйăх çеç пĕлĕт катрамĕсем хушшипе пĕр сассăр çӳрет, Чуманкка канлĕхне хураллать. Акă каç хуралçине хура пĕлĕт хупăрларĕ, тавралăх тĕксĕмленчĕ. Сĕмлĕхпе усă курса темĕнле мĕлке урам тăрăх йăпшăнса шурĕ. Вăл Чуманкка тĕлĕрекен çил хапхаллă картиш тавра сас-чӳсĕр çаврăнчĕ. Мĕлке çĕкленчĕ, ытамне сарса вĕрлĕк урлă кармашрĕ, лав çинчен пĕр çĕклем çӳхӳ илчĕ, тем самантран тĕттĕмлĕх чаршавĕ хыçне пытанчĕ.

* * *

Ĕнтĕ уйăх та çутатма пуçларĕ, ирхи шуçăм та килчĕ... Чуманкка куçне уçрĕ. Хĕвел тухайман-ха — шăпах çула тухма вăхăт. Ĕç лаши тутлăн карăнса илчĕ те урапине туртса çил хапхаллă картаран тухрĕ. Лав çинче çӳхӳ шучĕ ĕнерхинчен сахалтарах пулнине асăрхаймарĕ вăл.

Йытă калаĕ адреспа Чуманкка армак-чармак хурама патне çул тытрĕ. Анчах мĕн ку? Чуманкка тĕлĕннипе тăпах чарăнчĕ: çул тăршшĕпех çӳхӳсем выртаççĕ. Пĕри тепринчен техĕмлĕрех шăршă сараççĕ. Лаша сĕлекине лăнкăрт çăтрĕ. «Кĕçĕр çӳхӳ çумăрĕ çуса иртмен-ши? Телей тени пĕлĕтрен тăкăнать пулас», — шухăшларĕ вăл. Акă ĕнтĕ унăн пӳрт хăпартса чус витмелĕх те, урай хăми туянмалăх та çӳхӳ пур. Чуманкка çул çинчи çӳхӳсене пуçтарчĕ те çунатлă

ёмётне пурнăçа кёртме палăртнă çулпа васкарĕ. Анчах ёмĕте ёмеймĕн. Ултавĕ хăйĕнчен малта пынине ăнланаймарĕ айванскер.

Кĕçех армак-чармак хурама курăнма пуçларĕ. Ку уйра Чуманкка нумаях пулмасть суха тунăччĕ. Унтанпа улшăнусем пулнă иккен. Хурама айĕнче илемлĕ керменкке курăнать. Çакăн евĕрлĕ тетте çуртсене Чуманкка тиха чухне курнăччĕ. Пĕррехинче амăшĕпе пĕрле вĕсем хулана тырă леçме кайнăччĕ. Амăшĕ икĕ турта хушшинче тапса туртатчĕ, Чуманкка ун çумĕнче выляса пыратчĕ. Тĕрлĕ-тĕрлĕ сăрăллă, хĕвел тĕрри эрешлĕ керменккене — шăп та лăп армак-чармак хурама патĕнчи евĕрлĕскерне — курсан тăрăс-тăрăс сиккелерĕ Чуманкка. «Кунта «Лар та ярăн» вăйă картине кĕме билетсем сутаççĕ», — ăнлантарчĕ ăна амăшĕ. Вăл билет туянчĕ те пĕчĕк Чуманккана круççельпе ярăнтарчĕ. Юнашарти чĕнтĕрлĕ алăк çине «Кулас килет-и?» тесе çырнăччĕ. Кулăш пӳлĕмĕнче Чуманкка выртса йăвалансах кулнăччĕ: тĕрлĕ тĕкĕрсем хăвăн сăннах питĕ кулăшла туса кăтартаççĕ-çке.

Халĕ армак-чармак хурама патĕнче кам тата мĕн сăлтавпа йĕркеленĕ-ши çавнашкал аттракцион? «Круççель çавăраççĕши е култараççĕ-ши кунта?» — кăсăкланчĕ Чуманкка. Вăл тетте çурт тавра утса çаврăнчĕ. Ун çине çырнă пĕлтерĕве пĕрремĕш класс ачи пек тăстарса сыпăкăн-сыпăкăн вуларĕ:

— «Хăлхапа Асав Шăл» фирма. Пĕлтерӳ: «Паян пирĕн патăмăрта пĕрене сутакан аукцион пулать». Ха, эпĕ тĕрĕсех килнĕ иккен, — хавасланчĕ Чуманкка.

— Ырă сунса кĕтетпĕр, — терĕç ăна керменккерисем çепĕç сасăпа. — Мĕн туянасшăн эсир?

Чуманкка эрешлĕ чӳрече çине кăсăкланса пăхрĕ, унтан чуна çӳçентерекен асав шăлсем курăнчĕç. Лаша ӳт-пĕвĕ сăрăлтатса илчĕ. Çак çивĕч шăлсене таçта курнă пек туйăнчĕ, анчах ăçта курнине аса илеймерĕ вăл.

— Пӳртлĕх йывăç туянасшăн, — пăлханса калаçрĕ Чуманкка.

— Хаваспах сутатпăр. Малтанхи хакĕ çапла: пĕр пĕрене пуçне — çĕр çӳхӳ, — евĕклĕн калаçрĕç керменккерисем.

— Манăн пĕр лав çӳхӳ пур. Пӳрт лартмалăх пĕрене кирлĕ.

— Юрать. Миçе пĕрене кирлĕ-ха?

— Пĕлместĕп.

— Сирĕн миçе çӳхӳ пур?

— Пĕр лав. Шутласа пăхман. Эпĕ шутлама пĕлместĕп, — пуçне чиксе каларĕ Чуманкка пăшăлккă сасăпа.

Сутуçă çакна çеç кĕтнĕн:

— Юрĕ, хам шутласа паратăп. Вунă çӳхӳ тӳлĕр, — терĕ.

— Килĕшетĕп.

Эрешлĕ чӳречерен çăмламас алă тăсăлса тухрĕ те лав çинчи çӳхӳсене хăвăрттăн шутларĕ.

— Ку çӳхӳсемпе эсĕ виçĕ пĕрене туянма пултаратăн, — пулчĕ хурав, çепĕç сасă тем самантра сивĕ тимĕр сасăпа ылмашрĕ.

— Ку çӳхӳсемпе пĕр пӳрт хăпартмалăх йывăç туянма май пуррине эпĕ пĕлетĕп. Мана Сарă Чăх шутласа панă. Вăл пултаруллă шут ăсти. Йăнăшмастех... — терĕ Чуманкка.

Вăл ним тума пĕлмесĕр тетте çурт тавра утса çаврăнчĕ. Вунă çул тар юхтарса ĕçленĕшĕн илнĕ шалупа виçĕ пĕрене çеç туянма пулать. Ку аукцион мар, пур пек пурлăха хыпса çăтакан пасар, кулăш пӳлĕмĕнче нуша амакĕ кăтартакансем. «Вырт та макăр» темелле пуль ку çăткăн пасар будкине.

Чуманкка чунĕ хурланса килчĕ. Вăл чăнах та выртса йăваланса макăрма та хатĕрччĕ. Çапах та чунне хытарма вăй çитерчĕ. Пĕр сас та кăлармарĕ. Чăтрĕ. Питĕ чăтăмлă ĕç лаши çав Чуманкка. «Чим-ха, эпĕ те çул çинче çӳхӳсем пуçтартăм-çке. Малашне тӳперен çӳхӳсем çусах тăрсан йывăç хакланни пысăк инкекех мар — çӳхӳсене темиçе лав та тиесе килме пулать. Чăнах, пӳрт туянма та май килĕ, хам та тăраничпен çӳхӳ çийĕп», — шухăшларĕ вăл. Çаврăннă кăмăлпа керменкке чӳречи патне пычĕ.

— Килĕшетĕп сирĕн хакпа — виçĕ пĕрене парăр.

— Ку паçăрхи хак. Унтанпа çӳхӳ хакĕ йӳнелнĕ. Пĕр пĕрене çеç пама пултаратăп.

Чуманкка çакна илтсен — чĕлхине çухатнă тейĕн — пĕр сăмах та чĕнме пултараймарĕ. Ним тума пĕлменнипе каллех тетте çурт тавра утса çаврăнчĕ.

— Килĕшетĕр-и? —васкатрĕç ăна.

— Çӳхӳ хакĕ мĕншĕн чакать? — тинех сăмах çаварса ячĕ Чуманкка.

— Хуравлатăп. Керменкке тăррине пăхăр.

Чуманкка çӳлелле пăхрĕ — икĕ хăлха кăнтарса тăрать.

— Çак хăлхасем, — тĕнкĕлтетрĕ тимĕр сасă, — халĕ çеç çĕнĕ хыпар илчĕç. — Каллех тепĕр касă çӳхӳ çуса иртмелле. Сирĕн пурлăх вара пĕтĕмпех хăй хакне çухатать. Нимĕн туянмасăрах юлатăр. Çавăнпа васкăр... Туянса юлăр.

— Килĕшетĕп. Пĕр пĕренепех килĕшетĕп, — хыпаланса ӳкрĕ Чуманкка.

— Çук. Ку паçăрхи хак. Эпĕ сана пĕр лав çӳхӳпе шăл хушшине чакаламалли шăрпăк пама пултаратăп.

— Килĕшетĕп, — илтĕнчĕ Чуманккан вăйсăрланнă сасси...

Аукцион хăй ĕçне вĕçлерĕ. Чуманкка туяннă таварне — шăл хушшине чакаламалли шăрпăка — илчĕ те киле таврăнчĕ. Вунă çул хушши тӳрĕ кăмăлпа, кану мĕнне пĕлмесĕр ĕçленĕшĕн илнĕ шалупа шăрпăк туянчĕ-çке вăл. Шăр-пăк!.. Вунă çул тар тăкнишĕн — шăрпăк. Пĕрре шутласан ку — çĕр йăтайми мăшкăл: лаша ĕçĕ шăрпăк вĕçне юлчĕ. Тепре шутласан — тӳперен ӳкнĕ телей. «Çӳхӳ çусах тăрсан ку шăрпăк шăл хушши чакалама чăнах та кирлĕ пулĕ те», — çапла шухăшпа кĕчĕ Чуманкка çил хапхаран.

Ĕçне кура хисепĕ тет те ял-йыш, анчах ăна ĕç лашисем пирки каламан çав.

* * *

Чуманкка куçран çухалсанах керменкке алăкĕ уçăлчĕ. Унтан йытă тухрĕ. Çил хăвалама çеç мар пултарать иккен вăл. Çӳхӳ çиме те пултарать. Паллах, айван лашасем пулăшнипе.



## Саккăрмĕш сыпăк

## ЧĔПĔ ÇАР КĔРЕШĔВЕ ТУХАТЬ

Сарă Чăх чĕпписене апат шырама вĕрентет:

— Кăт-кăт. Пĕрре малалла, иккĕ каялла умлăн-хыçлăн чавала. Вăт, вăт. Тинкерсе пăхмалла — тутлă хурт тупмалла.

Анчах чĕпĕ çарăн пачах та урăх шут, апат шырасси мар. Хырăм выççине чăтма пулĕ, анчах Автан хуйхăпа хуçăлнине епле лăпкăн пăхса тăрăн? Вăл халĕ те тĕттĕм кĕтесре çунат усса ларать. «Çавра кÿлле тупмалла, аттемĕре пулăшмалла», — çакăн пек пĕр шухăш патне пырса тухрĕç чĕпсем. Амăшĕ улăм çинче чаваланнă вăхăтра вĕсем вăрттăн план хатĕрлерĕç. Ун çинчен Сарă Чăхха калас мар терĕç.

Каç пулчĕ. Сарă Чăх пур пек чĕппине пуçтарса сарай çунатти айне ларчĕ. Пурте çывăраççĕ. Вăрттăн плана пурнăçа кĕртме майлă самант çитрĕ.

Шиппи амăшĕ айĕнчен тухса çĕре кусса анчĕ, йăмăкĕ-

сем — ун хыççăн. Чĕпĕ çар сарай хыçĕнчи хӳме хушăкĕнчен йăпшăнса тухрĕ те кукăр-макăр çулпа куç курнă еннелле утрĕ. «Шикленекен — шик тупать, тăрăшакан тус тупать», — аса илчĕ Шиппи амăшĕн сăмахĕсене. Вăл шикленмесĕр хăюллăн малалла утрĕ, ун хыççăн — йăмăкĕсем. Хирĕç пĕр ушкăн вăрăмтуна вĕçсе килет.

— Вăрăмтунасем! Çавра кӳлĕ ăçтине калаймăр-и?! — кăшкăрчĕ Шиппи.

Вăрăмтунасем ирĕксĕртен тенĕ пек çапла хуравларĕç:

— Чăх чĕпписем, эсир пире вак-тĕвек ыйтусемпе чăрмантарса ан çӳрĕр. Эпир ахаль вăрăмтунасем мар, эпир — ВĂШТИКсем. Пирĕн ушкăн чи-чи ăслă сăмахсемпе чăн-чăн ĕç синчен çеç калаçать. Пирĕн пуçару вышкайсăр аслă пĕлтерĕшлĕ.

— Хи-хи-хик. Вĕсем ВĂШТИК çинчен илтмен те, — ихĕлтетрĕç вăрăмтунасем. Унтан пĕрне-пĕри пӳлсех ăнлантарчĕç:

— ВĂШТИК вăл — пирĕн пуласлăх. Çутă пуласлăх!

— Хĕвел пек çутти!

— ВĂШТИК — пирĕн вăй!

Анчах чăх чĕпписем нимĕн те ăнланмарĕç. Чăрсăрри ыйту памасăр чăтаймарĕ:

— ВĂШТИК тени мĕн тени-ши?

Вăрăмтунасем мăнаçлăн, пысăк туйăмпа, кашни сăмаха уçăмлăн палăртса ăнлантарчĕç:

— Вышкайсăр!.. Ăслă!.. Шухăшпа!.. Талпăнакан!.. Ирĕклĕ!.. Кăпшанкăсем!.. Акă камсем вĕсем ВĂШТИКсем!

— Эсир ăçталла талпăнатăр? — кăсăкланчĕ Пуçтаххи те.

— Пирĕн тĕллев — чи Çутă Пуласлăха çитесси!

Чĕпĕ çар малалла утрĕ. Шăкăл-шăкăл калаçса, вăрăм çула кĕскетсе, утнă чухне утса, чупнă чухне чупса кайрĕç чĕпсем.

— Манăн пуласлăх — атте пек, тĕнчене тĕлĕнтермелле авăтакан автан пуласси. Те çутă, те тĕттĕм вăл — пĕлместĕп, анчах вăр çавракa пултăрччĕ... Çавра кӳлĕ пек. Туслă вăйă карти пек, — ĕмĕтленчĕ Шиппи.

— Манăн Çавра кӳлĕ вăррине сăмсаран шаккас килет, —

сиккелерӗ Пуҫтаххи. — Малашне вӑрлама ан сӗмлентӗр.

— Малтан ӑна тытмалла-ха. Унсӑрӑн хӑв сӑмсасӑр юлӑн, — чӗрре кӗчӗ Чӑрсӑрри. Пуҫтаххине аякӗнчен тӑрӑслаттарса илме те ӗлкӗрчӗ.

– Чарӑнӑр-ха эсир, — вӑй-хала перекетлӗр, — хӑтӑрса илчӗ Тӗпекли.

Кӗтмен ҫӗртен чӗпсем утакан сукмак тӗлӗнчи ҫӗр мӑкӑрӑлса тухрӗ те, ӑскӑч ӳссе ларчӗ. Куҫ хупса иличчен ӑскӑч чӗпсем ҫине ӳкрӗ. Шиппи аяккалла сикме ӗлкӗрчӗ, йӑмӑкӗсем тыткӑна ҫакланчӗҫ. Хӑюллӑ Шиппи куҫа курӑнман тӑшманпа ҫапӑҫма, йӑмӑкӗсене ирӗке кӑларма ыткӑнчӗ. Анчах усӑсӑр: ӑскӑч, ӑна тыткӑнри чӗппи-мӗнӗпех ҫӗр ҫӑтрӗ тейӗн, куҫран ҫухалчӗ. Ҫав вырӑнта ҫӗр мӑкӑрӑлчӑкӗ ҫеҫ юлчӗ.

Тӗттӗм. Уй варринче Шиппи пӗччен. Эх, тепре курасчӗ йӑмӑкӗсене!

Вӑл тайӑла-тайӑла малалла утрӗ. Утсан-утсан урисем утми пулчӗҫ, вӑйӗ пӗтсе ҫитрӗ. Ирхи сулхӑнпа шӑнса хытӑрканӑран тата хырӑмӗ чӑтма ҫук выҫса ҫитнӗрен Шиппи пӗтӗм кӗлеткипе тӑр-тӑр чӗтрерӗ. Вӑл ҫул хӗрне хутланчӗ, ҫуначӗсем усӑнчӗҫ. Чӗп вилме хатӗрленчӗ. Анчах йӑмӑкӗсене хӑтарас, ҫухалнӑ кӳлле тупас ӗмӗт ӑна вӑй пачӗ. Вӑл автан-ҫке! Шиппи ҫӗкленчӗ те малалла утрӗ. Утнӑ чух вӑл халтан кайнипе енчен енне сулӑнчӗ, тӑр-тӑр чӗтрерӗ. Сасартӑк темӗн вӑштик туса илчӗ те Шиппи такамӑн кӗвӗллӗ ҫепӗҫ сассине илтрӗ: «Тӑр-тӑр чӗппи, чӑх чӗппи, ӑҫта каятӑн, Шиппи?»

Ку вӑл эреветлӗ-теветлӗ юрлакан Пархатарлӑ Пӑчӑнтӑр пулчӗ. Шиппи чӗкеҫ сӑмахӗсене илтрӗ, анчах хирӗҫ сӑмах хушма хал ҫитеймерӗ унӑн. Пархатарлӑ Пӑчӑнтӑр мӗн тумаллине самантрах тавҫӑрса илчӗ. Вӑл шурут курӑкне аврӗ те вӑррине тӗшӗлесе Шиппине ҫитерчӗ. Пӗр пӗрчӗ сӑхма ӗлкӗрнӗ ҫӗре Шиппи хӑлхинче ҫакӑн пек сӑмахсем янӑраrӗҫ: «Ҫавра ҫулпа ҫӳресе вӑхӑта ҫухатрӑм пуль, вӗҫмеллеччӗ тӳр ҫулпа чӑх чӗппине пулӑшма. Нуша тени йывӑр-ҫке —

ӑна ҫӗнме кирлӗ вӑй. Шурут вӑрри ҫуллӑ мар, ҫапах сӑхха — ӑша яр. Ӑша ярсан ӗшенни иртсе каять туххӑмра». Шиппи тепӗр пӗрчӗ сӑхма ӗлкӗреймерӗ — Пархатарлӑ Пӑчӑнтӑр хӑйне ӳпкелесе те илчӗ: «Хӗвел тухиччен хӑвалӑхри хӗрлӗхен тӑрринчи мерчен пӗрчисемпе мар, уничери ӳхлӗм ҫинчи сывлӑмпа ҫеҫ ҫӑвӑнмаллаччӗ. Ҫисӗм пек вирхӗнсе Шиппине пулӑшма килмеллеччӗ». Вӑл Шиппи тата тепӗр пӗрчӗ сӑхса иличчен ҫапла такмакласа та хучӗ:

Шурут вӑрри — мӗн пурри —
Чӗре сури пултӑр-и.
Тӑр-тӑр чӗппи ҫухалтӑр,
Сар Чӑх чӗппи йӑл култӑр.

Чӗкеҫ сӑмахӗсем Шиппине амӑшӗн ачаш сӑмахӗсене аса илтерчӗҫ, шӑнса хытнӑскерне амӑшӗн ӑшӑ ҫуначӗсем пек ӑшӑтрӗҫ. Вӑл ӗнтӗ тӑр-тӑр чӗтреме пӑрахрӗ, вӑй-хал хушӑннине туйрӗ. Шиппи чӗкеҫ такмакӗнче каланӑ пек хаваслӑ кулӑпа ҫиҫсе илчӗ. Анчах нуши-терчӗ асран тухмарӗ ҫав. Вара вӑл чун тӗпӗнче мӗн пуррине йӑлтах Чӗкеҫе каласа пачӗ: чӗпӗ ҫар мӗн сӑлтавпа ҫула тухнине те, куҫа курӑнман тӑшман йӑмӑкӗсене тыткӑна илнине те, ВӐШТИКсем ҫинчен те...

Пархатарлӑ Пӑчӑнтӑр тимлӗн итлерӗ, татах такмакларӗ:

Йӗксӗк пур ҫак таврара —
Кайрӑм-кайрӑм каюра.
Хӑлхисем ун шӑтӑкра,
Ури ҫитнӗ кантура.

Вӑл Шиппи йӑмӑкӗсене каюра – Суккӑр Ӑс вӑрлама пултарнӑ терӗ. ВӐШТИКсене ӑмсанса хыҫҫӑн кайма хушмарӗ.

«ВӐШТИК пуласлӑхӗ эпӗ тӳпене вӗҫсе хӑпарсанах сӳнет — сар хӗвел хӗмне сапаймӗ ҫӗрӗк тунката... Анчах Ҫавра кӳлӗ ӑҫтине эпӗ те пӗлейместӗп», — ҫапла каларӗ те Пархатарлӑ Пӑчӑнтӑр вӑй илсе тӗрекленнӗ чӑх чӗппине Ҫавра кӳлӗ пулнӑ вырӑна, шӑршлӑ кӳлленчӗк енне, ҫул кӑтартса ячӗ. Шиппи ҫула тухрӗ.



## Тăххăрмĕш сыпăк

# УРРА УРХАМАХПА ПЕРЕКЕТ МАШИНИ

Хур Хушсалар кантурĕнче ĕç вĕресе тăрать. Маттур ăстаçă Шакла Ăс инçесаспару, инçекурăну аппарачĕсем вырнаçтарчĕ. Пуçлăх халь вырăнта ларсах Тарьюхтар ялĕнче мĕн пулса иртнине илтсе-курса ларĕ. Анчах çĕнĕ аппаратсемпе усă курнипе пĕрлех унччен шанчăклă çыхăнăва та татмасть вăл. Акă паян та çĕр мăкăрăлчăкĕнчен Суккăр Ăс тухрĕ.

— Пурте йĕркеллĕ. Хушнă — пурнăça кĕртнĕ, — пĕлтерчĕ вăл кантура кĕрсе.

— Сар сăмсаллă чĕпĕ çар ăçта? — ыйтрĕ Хушсалар.

— Шăплăх шырланĕнче канаççĕ.

— Шанчăклă-и?

— Шанчăклă. Унтан вĕсем нихçан та тухаймĕç.

— Çавра кӳлĕ вăррине сăмсаран шаккас текенĕ те-и?

— Паллах, вăл та.

— Маттур. Халь хăв та канса илме пултаратăн. Анчах... хăлхусем вырăнта пулччăр.

Суккăр Ăс тухса кайрĕ, Хушсалар инçекурăну пускăчне вылятрĕ. Экран çинче Урра Урхамах курăнса кайрĕ. Çичĕ ĕç лаши тăвас ĕçе пурнăçлама пултаракан мухтавлă урхамах çĕртме сухи тума тухнă иккен. Ак вăл ăмăрĕпе пĕлĕте перĕнес пек каçăрălса, çилхипе шевле сарри пек йăлкăшса сухапуç патне утса пычĕ те турта хушшине тăчĕ. Урисем туртара та çĕре тивмеççĕ — тапăртатса çеç тăраççĕ.

— Вăт ку урхамах. Чăн-чăн урхамах. Мĕскĕн Чуманкка мар ĕнтĕ, — экранпа калаçрĕ Хушсалар.

Кĕçех хăватлă урра! кăшкăрни янăраса кайрĕ — Урра Урхамах çĕртме тума палăртнă уя урлă та тăрăх пысăк хăвăртлăхпа чупса çаврăнчĕ. Анчах мĕн амакĕ ку? Унччен, Чуманкка сухаланă чухне, сухапуç хыççăн тӳп-тӳрĕ суха касси йĕркен-йĕркен выртса юлатчĕ, халĕ нимĕнле касă та курăнмасть. Пуçлăх экран çине тимлĕрех пăхрĕ те акă мĕн асăрхарĕ: сухапуçĕнчен ним те юлман — вăл йăлтах арканса тухнă. Урра! кăшкăрнипех ĕç ăнмасть иккен.

Пуçлăх шухăша путрĕ. Çĕртме сухине мĕнле майпа туса пĕтермелле? Сасартăк инçесаспару аппарачĕ шăнкăртатрĕ. «Акарин те макарин, ыран-паян килмесен ӳкетĕп те вилетĕп», — васкавлă хыпар пĕлтерчĕ урпа.

— Уйра урпа тăкăнать, халех вырса илмелле! — хушу пачĕ Хушсалар.

Экран мĕлтлетсе илчĕ. Çĕнĕ хушу илнĕ урхамах ăнман ĕçе пăрахса урпа уйне васкарĕ. Унта çĕнĕ йышши комбайн хатĕрех тăрать ĕнтĕ. Каллех хăватлă урра! янăрарĕ. Комбайн çиçĕмле хăвăртлăхпа çаврăнма пуçларĕ, анчах пĕрремĕш сулнăкрах ӳпĕнсе кайрĕ. Урра! кăшкăрнипех урпа та вырăнмасть иккен.

Хушсалар Урра Урхамаха тата темиçе ĕç хушрĕ. Кашни хутĕнчех ĕçе пуçăннă чухне хăватлă урра! кĕрлерĕ — ĕç

кĕрлемерĕ, çил вĕçрĕ — ĕç вырăнтан хускалмарĕ. Чăнах та, урра! кăшкăрнипе çеç урлă выртакана тăрăх çавăрма та май çук иккен.

Хушсалар аптăранă енне тапăртатса илчĕ, аппарат пускăчĕсене купăс каланăн вылятрĕ. Юлашкинчен Шакла Ăсран ăс ыйтрĕ. Лешĕ тӳрех кирлĕ канаш пачĕ:

— Эпĕ нумаях пулмасть Тарьюхтар ялĕнчи ĕçлевçĕсен мĕнпур ĕçне йĕркелесе пыракан Перекет машини ăсласа кăлартăм. Урра Урхамаха çавăнпа ĕçлеттермелле. Çав машина кирек мĕнле ĕçе те тирпейлĕн, тарьюхтарсен кăмăлне килмелле пурнăçлать.

Экран мĕлтлетсе илчĕ те, Хушсалар Шакла Ăсăн асăрхаттаруллă сăмахĕсене илтсе юлчĕ: «Перекет машинин пĕр çитменлĕх пур — унăн чунĕ çук...»

Хушсалар хушнипе Урра Урхамах умне тĕлĕнтермĕш машина çитсе те ларчĕ.

— Малашне ĕмĕрхи, кутемĕн юрăхсăра тухнă, ака-вырма юхăнчăкĕсемпе мар, Перекет машинипе ĕçлеме пуçлатăн, — хушу пачĕ Хушсалар. — Анчах малтан унăн чунне шыраса туп.

Урра Урхамах хăйне хушнине пурнăçлас тĕллевпе уй-хир тăрăх çиçĕмле хăвăртлăхпа çӳрерĕ. Урисем çĕре тивмерĕç унăн. Урлă утмăл, тăрăх тăхăрвуннă çаврăнчĕ вăл анлă уйхирте, анчах машина чунĕ тупăнмарĕ, унпа ĕçлесси те пулмарĕ. Урра Урхамах çиллине шăнараймасăр ăнман машинăна пĕррех тапса ячĕ — лешĕ хускалса илчĕ.

— Урра! Перекет машини ĕçлет! — янăраса кайрĕ хăватлă сасă.

Савăнни кăлăхах пулнă иккен — машина тепĕр май çаврăнса ӳкрĕ çеç. Унăн чунĕ тупăнмарĕ.





### Вуннăмĕш сыпăк

## ШĂПЛĂХ ШЫРЛАНĔНЧИ ТЫТКĂНÇĂСЕМ

Шăп. Хăрушă. Сивĕ. Тыткăнçăсем тарăн шырлан тĕпĕнче чĕтресе лараççĕ. Кун çути шырлан тĕпне хупах çулçисем витĕр çеç сăрхăнса кĕрет. Çавăнпа кунта çурма тĕттĕм.

Кассăн-кассăн çил килчĕ, хупах çулçи сирĕлчĕ, сенкер тӳпе курăнчĕ. Ирĕке тухас ĕмĕт чĕпсене вăй-хал хушрĕ. Вĕсем чĕтреме пăрахрĕç. Пуçтаххипе Чăрсăрри хысак çине хăпарасшăн чакаланма пуçларĕç. Анчах кăлăхах — хăпарнăçем тăпра ишĕлчĕкĕпе пĕрле каялла шăва-шăва анчĕç.

— Эх, пусма çук, — хурланчĕ Хурлăхли.

— Çукки хыççăн ан çӳре, пуррине перекетле тетчĕ анне. Атьăр пурте пĕрле канашлар: пирĕн кунта пусма тумалли мĕн пур? — ĕçлĕн калаçрĕ Тĕпекли.

Тыткăнçăсем пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн пăхса илчĕç.

— Нимĕн те çук.

— Хамăр кăна.

— Хамăр пурри ним çукки мар.

— Хамăр пусма пулар. Йышпа чух инкек хăрушă мар, — хăюллăн каларĕ Йăвашши амăш сăмахĕсене асра тытса.

— Эпĕ цĕр картлашки пулатăп, — терĕ Каптăркка.

— Эпĕ тепри...

— Эпĕ тата тепри...

Çапла вара Йăвашши Каптăркка çине, Хурлăхли Йăвашши çине хăпарса тăчĕç. Виçĕ картлашка пулчĕ те. Анчах шырлантан тухас тесен тата тепĕр икĕ картлашка кирлĕха. Çавăнпа та Тĕпекли Хурлăхли çине, Пуçтаххи Тĕпекли çине хăпарса тăчĕç. Чăрсăрри валли пилĕк картлашкаллă пусма пулса та тăчĕ. Вăл ун тăрăх çăмăллăнах шырлантан тухрĕ. Кĕтмен çĕртен пысăк инкек пулчĕ. Каптăркка сăмси çине вăрăмтуна пырса ларчĕ те хобочĕпе кăтăкларĕ. «Апчху! — янăраса кайрĕ Шăплăх шырланĕнче. Тăвата картлашка çĕре персе анчĕ.

— Пĕтрĕ пусма, — хурланчĕ Хурлăхли.

— Ун вырăнне пулăшу патакĕ тупрăм. Тыт çирĕпреххĕн, — ку сасă çӳлтен, хупах хушшинчен илтĕнчĕ. Хурлăхли кĕттермерĕ — хăйне тăсса панă патака çатăрласа илчĕ. Çапла майпа Чăрсăрри малтан Хурлăхлине, ун хыççăн ыттисене те шырлантан туртса кăларчĕ.

Йышпа тем те тума пулать. Ирĕклĕхе çĕнсе илме те... Шиппи вара пĕччен. Инкек пулман-ши унпа? Чĕпĕ çар пулăшма васкарĕ.





## Вунпӗрмӗш сыпӑк

### ШИППИ ЙӖР ÇИНЕ ӲКЕТ, ХӐРУШЛӐХРАН ХӐТӐЛАТЬ. ЙЫТӐ ХӲРИНЕ ХӖСТЕРЕТ

Шиппи кӳлленчӗк хӗррине çитрӗ. Унтан усал шӑршӑ перет. Çак килпетсӗр вырӑнта киленӗç тупакансем те пур иккен.

Па-ак! Па-ак! Па-ак!
Кӳлли лӑймак, патши шаймак.
Кунта хамӑн ирӗк,
Кунта хамӑн ирӗк! —

тет пӗр шапа. Икӗ уран тӑрсах кӑшкӑрать. Шиппи унпа калаçса пӑхасшӑн.

— Эй, пак-пак-пак! Эсӗ Çавра кӳлӗ ӑçта çухалнине калаймӑн-и? — ыйтрӗ вӑл.

Шапашӑн çӑвӑр автан кӳлӗ шырани кулӑшла пек туйӑнчӗ. Çавӑнпа вӑл чӗлхе кӑларсах витлевлӗн саламларӗ:

Автан пĕççи шатра,
Хӳри вĕçĕ кăтра,
Килнĕ кӳлĕ хĕррине,
Лапăртанă урине!

Шеп сăмахсем калама пултарнăшăн савăннăскер, шапа меселе выртсах ахăлтатрĕ. Шиппи кӳренмерĕ. Кĕске ăса — кĕске сăмах тенине чухларĕ вăл. Шухăшсăр ахăлтату чарăнма шутламасть-ха:

Эпĕ Шапа пак-пак-пак!
Юррăм юхтăр квак-вак-вак!
Шампа шывра — шампăлтик,
Выртать чĕмсĕр — пăшăлтик!

Çак пакăлтатура Шиппи хăйне кирлĕ сăмахсене илтсе юлчĕ. Кунта Чĕмсĕр Шампа та пур иккен.

— Эй, Шампа! — чĕнчĕ Шиппи.

Пулă сас памарĕ. Вăл чĕлхесĕр. Çăварне каркалать. Шиппи мĕн тумаллине тавçăрса илчĕ, пĕтнĕк çулçи çинчи сывлăма пухса пулă çăварне ячĕ. Юшкăн çинче выртакан пулă кăмăллăн хускалса илчĕ, çуначĕсене вылятрĕ.

— Эсĕ те ман пекех кӳлĕ шывне шыратăн пулас, Шампа тус, — тавçăрса илчĕ Шиппи. — Вăл ăçтине пĕлетĕн-и? Кам вăрланă ăна?

Пулă вăртах çаврăнчĕ те хӳрипе кӳлленчĕке тĕллесе кăтартрĕ, унтан ыйту палли пек кукăрăлса выртрĕ. Шиппи шухăша путрĕ: ăçта курнăччĕ-ха вăл кунашкал паллă?.. Чим, Автанпа Хушсалар çапăçма хатĕрленнĕччĕ. Шăпах вăл, Хушсалар, мăйне çапла кукăртнăччĕ. Ăнланма çук хура вăйпа ашшĕне çĕнтернĕччĕ. Пĕтĕмпех паллă: Çавра кӳлле вăрлаканĕ — Хушсалар. Шиппи йĕр çине ӳкрĕ — унăн кăмăлĕ уçăлчĕ.

— Çавра кӳлле Хушсалар патĕнче шырамалла, — сасăпах каларĕ вăл. Пулă килĕшсе пуçне сĕлтрĕ. Кĕтмен çĕртен хупах хушшинчен Йытă сиксе тухрĕ.

— Хам хăлхапа илтрĕм хам. Çăвăр автан кӳлĕ ширать. Мĕн тума — пĕлетĕп хам. Çунат çапса çăвăнать, мана валли

тутлă яшка пулать, — çапла каласа асав шăлне кăтартрĕ Йытă. Шиппи патнех çывхарчĕ. Инкекрен мĕнле хăтăлмалла? Шиппи Шампа çурăмĕ çине сикрĕ, кӳлленчĕк аррине ишсе кĕчĕ. Анчах çăлăнас шанăç пăхсан та курăнмасть. Йытă килпетсĕр кăмăлне ирĕке ячĕ — хӳре пăрасран хăрамалли çук. Вăл асав шăлĕсене йĕрсе çывхарать те çывхарать. Кӳлленчĕкре йĕркесĕр пăтрашăну пуçланчĕ. Шиппи пулă-кимĕпе енчен енне пăркаланать, Йытă ăна тытасшăн хыçран талпăнать. Пак Шапа хăлхана çурасла кăшкăрать — пулăшу ыйтать.

Шапа хурахлатни пĕтĕм Тарьюхтар ялне ура çине тăратрĕ. Унта чи малтан чĕпĕ çар çитрĕ. Шăплăх шырланĕнчен хăтăлса тухнă чĕпсем Шиппине пулăшма ыткăнчĕç, ун хыççăн — ыттисем те.

— Пулăшу патакне пĕрле илмеллеччĕ, — ӳкĕнĕçлĕн каларĕ Чăрсăрри.

— Çукки хыççăн çӳрер мар, пурте пĕрле пĕр чăмăр пулар, — канаш пачĕ Тĕпекли. Тарьюхтар ялĕнче пурăнакансем кӳлленчĕк тавра туслăх картине тăчĕç. Йытă хӳрине хĕстерчĕ.

— Курăр, курăр! Йытă хӳри хыçĕнче çӳхӳ сĕтĕрĕнсе пырать, — шӳтлерĕ тахăшĕ.

— Авă кусать. Чуманккан çил хапхаллă картине кĕрсех кайрĕ, — хушса хучĕ тепри.

Йытă хăйне тăрă шыв çине кăларнине туйса илчĕ, айăпласран хăраса Çилхăван çĕршывне тухса тарчĕ. Пуху пуçланчĕ.

Пуху хистенипе Хушсаларăн мĕнле майпа Çавра кӳлерен Кӳлчечек пулса тăнине каласа памах тиврĕ. Такăна-такăна каласа пачĕ вăл. Калаçнă чухне унăн сăмси каçăрăлмарĕ — çĕре лекмеллех усăнчĕ. Хĕрхенчĕç ăна тарьюхтарсем — каçарчĕç. Айăпласа ялтан хӳтерсе ярас текен те тупăнмарĕ.

Пухăва Шакла Ăспа Суккăр Ăс пыраймарĕç. Пĕри, шăтăк пичкере ăслăлăх ĕçĕпе тăрмашакансќер, ялти пысăк улшăнусем çинчен пĕлмен, тепри — пурне те пĕлсе тăраканни — чире персе выртнă. Çавра кӳлĕ малтанхи вырăна куçмарĕ-ха.



### Вуниккӗмӗш сыпӑк

## ЧӐНЛӐХА ЧУЛ АЙНЕ ХУР — ВӐЛ ЧЕЧЕК ПУЛСА ШӐТСА ТУХАТЬ

Тӗттӗм кӗтесре ҫунат усса ларакан Автан Ҫавра кӳлӗ тупӑннӑ тенине илтсен пуҫне ҫӗклерӗ, картиш варрине танлӑн утса тухрӗ. Унтан вӑл ҫунат ҫапрӗ те ҫил хапха ҫине вӗҫсе хӑпарчӗ.

— Ку-ку-ре-ку! Ҫавра кӳлӗ пур! — янӑрарӗ илемлӗ те янкӑс сасӑ.

Шиппи те ашшӗнчен юлмарӗ:

— Ку-ку-ре-ку! Эпӗ ку! Туслӑх кӑшӑлӗ те пур!

Хальхинче унӑн сассине ыттисем те илтрӗҫ: йӑмӑкӗсем те, урамрисем те, уничерисем те... Шиппи сасси ват Автан сассипе пӗрлешсе Тарьюхтар ялӗн ӳпкевлӗ кӑмӑлне сирсе ячӗ, хавхалану туйӑмӗ салатрӗ.

Тарьюхтар хапхи — çил хапха, уçăлать те хупăнать, чĕриклетсе сас парать. Ĕçлĕ кун пуçланать. Йĕрке хуралçисем Ват Автанпа Шиппи ăсчахсене пуху йышăнăвĕпе паллаштарчĕç.

— Йăнăша тӳрлететпĕр. Çавра кӳлĕ вырăнĕ — Туслăх карти варринче, — айăпне йышăнчĕ Шакла Ăс. Вăл хытă ӳкĕнчĕ, тарьюхтарсенчен каçару ыйтрĕ.

Суккăр Ăс чире персе выртрĕ. Хăй вара йĕрке хуралçисем тухса кайсанах никама систермесĕр çĕр хăвăлне пысăк чулпа пăкăласа хучĕ. Йышпа мĕн-ма тупăшас — ăна çĕнекен хальччен пулман. Чĕпĕ çар тăрăшнипе, Шакла Ăс вĕрентнипе Çавра кӳлĕ хăй вырăнне куçрĕ-куçрех, анчах малтанхи пек мар — асамат тĕрриллĕ чечекпе эрешленсе. Ĕçчен алă ĕç ыйтать, килĕшӳ вăй-хал хушать, пурнăçа ĕнĕçтерет. Тарьюхтарсем кар тăрса туса лартрĕç çĕн хапха.



**Вунвиççĕмĕш сыпăк**

## АВТАН ХАПХА ТĂРРИНЧЕ, КӲЛĔ ХĂЙĔН ВЫРĂНĔНЧЕ

Тарьюхтар ялĕн çĕн хапха — эрешленĕ чус хапха. Юрлаюрла уçăлать, Çĕнĕ кунпа саламлать. Чус хапхаран кĕрсенех Çавра кӳлĕ курăнать. Пĕрĕхтеркĕч шыв уçлать, хĕвел шевлипе вылять. Шевле сарри хĕмленет, тĕрлĕ тĕспе витĕнет. Тĕслĕ асамат ытамĕ пĕтĕм яла çупăрлать, Туслăх кăшăлĕ хывать.

Йĕрке хуралçи яланхи йăлапа чус хапха çине вĕçсе хăпарчĕ, янкăс сасăпа пурне те илтĕнмелле авăтса ячĕ:



— Ку-ку-ре-ку! Юмах вӗҫӗ ку!

Анчах Ҫерҫи:

— Чим-ха, чим, — тет. — Ачасем, хаклӑ вулаканӑмсем, кӗнекене васкаса хупса хума тӑхтӑр-ха.

Хӑй пӗр чарӑнми ӗҫлет — хӗвелҫаврӑнӑш шӗкӗлчет. Ҫерҫие пӗлетпӗр-ха: ҫук сӑмахран пур тӑвать. Анчах темшӗн кӗнеке хупӑнмасть те хупӑнмасть. Эппин, кӑштах тӑхтар-ха, тепӗр кана вулар-ха.

— Чим-ха, чим, — тет ҫав Ҫерҫи. — Урра Урхамах ҫинчен ҫӗнӗ хыпар илтнӗ-и? Перекет машинине чун кӗнӗ тет, чӑн-чӑнах. Чӗпӗ ҫар ҫинчен тата мӗн пӗлетӗр-ха ҫӗнни? Тухнӑ ҫӗнӗ ҫӳреве...





**Вунтăваттăмĕш сыпăк**

## ÇӲРЕВ ПУÇЛАНАТЬ КĂНА-ХА...

Кун иртрĕ те каç пулчĕ. Тарьюхтар ялĕнче тĕлĕнмелле пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Унта пурăнакансем пурте тар юхтарсах ĕçлеме пуçларĕç, пурнăça аванлатаççĕ. Чуманкка ĕçре ырă ят илчĕ, хăтлă çурт çавăрчĕ, çине калай витрĕ.

Шакла Ăс шăтăк пичкере пурăнмасть — аслă та çутă шкул çуртĕнче çитĕнекен çĕнĕ ăрăва ăс парать.

Хушсалар текех пуçлăх мар, никама та ĕç хушса лармасть. Вăл чечеклĕ уничере хăйне ята чăн-чăн кӳлĕ тăвасшăн тар юхтарсах тăрмашать. Хушсалар çемйи те асамат ытамĕнче савăнса пурăнтăр-иç — хĕвел çути пурне те çитет.

Чĕпĕ çар амăш пехилне асра тытрĕ. Шиппи ашшĕ пекех хăюллă йĕрке хуралçи пулса тăчĕ, нихăçан та çунат усса лармарĕ. Вăл тĕнчене тĕлĕнтермелле авăтма та пĕлет.

Чăрсăрри чăрсăрланма пăрахаймарĕ, ĕç йĕркине пăсакансене чăтма пултараймасть вăл. Кайри чĕпĕ Каптăркка халĕ ĕçре пуринчен малта пырать. Тĕрĕçĕ вăл, Туслăх кăртине тĕрлет. Пуçтаххи пуçтахланмасть. Вăл — керменçĕ, хăтлă çурт-йĕр ăсталать. Хурлăхли тек хурланмарĕ, чаплă юрăçа тухрĕ, çепĕç сассипе пурне те савăнтарчĕ. Йăвашши халь йăва ăшши мар — шут ăсти. Вăл амăшне пулăшать.

Тĕпекли çинчен тĕплĕнрех каласа хăварас килет. Вăл вĕренсе ăсла тухрĕ, Урра Урхамах пек çукки хыççăн çӳремерĕ. Вăл Шакла Ăсран ăс ыйтрĕ, хăяккăн выртакан Перекет машинипе ĕçлеме вĕренчĕ, кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшрĕ.

Перекет машинине чун кĕчĕ, вăл ĕçлеме пуçларĕ. Тĕпекли тĕрлĕ тĕслĕ пускăчсене вылятса кирлĕ программа лартрĕ: агрегат уй-хире сухаларĕ, сӳрелерĕ, тикĕслерĕ. Чуманкка яра кун тумалли ĕçе пĕр самантрах пурнăçларĕ. Пурнăç перекечĕн пуçламăшĕ мар-и ку?!

— Урра! Перекет машинин чунĕ пур! — янăрарĕ хыçра.

Хальхинче Урра Урхамах йăнăшмарĕ — шырани тупăнчĕ. Пурнăç перекечĕн машини хирте пĕр тикĕссĕн ĕçлерĕ.

Тепĕр юмахчен, ачасем!



# ТУПМАЛЛИ


*Пĕрремĕш сыпăк*. Тарьюхтар хапхи — çил хапха . . . . . 3
*Иккĕмĕш сыпăк*. Ах, кӳлли тăрăччĕ! . . . . . . . 5
*Виççĕмĕш сыпăк*. Автан тус, пуçна ан ус . . . . . . 6
*Тăваттăмĕш сыпăк*. Шут ăсти канать, йĕрке хуралçи халĕ те çунат усса ларать. Ял çăварĕ хапхасăр . . . 9
*Пиллĕкмĕш сыпăк*. Чĕпĕ çар килни . . . . . . . 12
*Улттăмĕш сыпăк*. Шакла Ăс, Суккăр Ăс тата Кӳлчечек 16
*Çиччĕмĕш сыпăк*. Çӳхӳ çуни . . . . . . . . . 18
*Саккăрмĕш сыпăк*. Чĕпĕ çар кĕрешĕве тухать . . . 24
*Тăххăрмĕш сыпăк*. Урра Урхамахпа Перекет машини . 28
*Вуннăмĕш сыпăк*. Шăплăх шырланĕнчи тыткăнçăсем . 31
*Вунпĕрмĕш сыпăк*. Шиппи йĕр çине ӳкет, хăрушлăхран хăтăлать. Йытă хӳрине хĕстерет . . . . . . . 33
*Вуниккĕмĕш сыпăк*. Чăнлăха чул айне хур — вăл чечек пулса шăтса тухать . . . . . . . . . . . 36
*Вунвиççĕмĕш сыпăк*. Автан хапха тăрринче, кӳлĕ хăйĕн вырăнĕнче . . . . . . . . . . . . . 37
*Вунтăваттăмĕш сыпăк*. Çӳрев пуçланать кăна-ха... . . 39



Литературно-художественное издание

*Для детей среднего и младшего школьного возраста*

**Николай ИЖЕНДЕЙ**
**(Петров Николай Петрович)**

**ÇАВРА КӲЛĔ ХĔРРИНЧЕ**
**НА БЕРЕГУ КРУГЛОГО ОЗЕРА**

**Сказка**

*На чувашском языке*

Редактор *А. К. Шашкина*. Художник *И. В. Алексеев*. Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*.
Технический редактор *Л. К. Егорова*. Корректор *Н. В. Григорьева*. Компьютерная верстка *Е. Л. Карпеевой*.
ОКДП 2211202. Изд.лиц. № 010047 от 24.12.96. Подписано к печати 3.12.01. Формат 84x108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ.л. 4,2. Учетно-изд.л. 2,26. Тираж 2000 экз. Заказ № К-2990. Изд. № 31. РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Отпечатано в типографии РГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.



Чăваш кĕнеке издательстви